# КАПКĂН

17-мĕш №

Ҫенҭапĕршĕн, 1927 ç.
3-мĕш çул тухаҭ.




— Мĕншĕн-ха ку „Капкăн“ хуплушкине симĕспе сăрласа кăларнă?

— „Капкăн“ симĕс курăк пек ђĕрĕ пултăр тесе пуђ ĕнтĕ хуплушкине симĕспе сăрланă. Пайан, вĕт петитеçатнитсă, 50-мĕш номĕрлă праçник. „Капкăнăн“ 50-мĕш комĕрĕ тухаҭ пайан.

# Йапӑх хурал пӳрҫӗ.



Кӑмпа вӑхӑтӗнҫе.

# П ӑ р ç а.

Пăрçа çинҫен калама сăмах нумай кирлĕ. Пăрçа вăл... тутлă мар, йĕксĕк вăл. Ăна çăвара ҫиксен пыр шăтăкĕ йăкăл-йăкăл тума пуçлаť...

Епĕ хам пăрçа çиме пăрахни, хырăмăм ерех ĕçме пăрахнинҫен ҫылайрах пулаť. Йĕксĕк ерехе ĕçме пăрахни пайанхипе ĕнтĕ... пĕрре, иккĕ... виççĕ, тăваттă, пилĕк... пилĕк кун. Пăрçине вара иртнĕ уйăхри первăй ҫисларанпах çиместĕп.

Мана иртнĕ уйăхра командировккă турĕç,—питпе йалалла йаҫĕç. Питпе йалалла кайса-кайсан, çитмелли вырăна Салма йалне шалтăртаттарса çитрĕм те, халăха пухха хăвалама хушрăм.

Пухăнҫĕ халăх тĕкĕлесе лартнă хурал пӳрҫĕ патне. Халăх пухăнса çитсен, йалканашĕпе епĕр фракси тума хурал пӳртне пĕшкĕнсе кĕрсе карăмăр. Ҫӳреҫисем витĕр çĕрле тăманасем кĕмелле, урай хăмине çĕртен тунă—çĕр питне саваласа тунă. Кăмаки пур та, çук та, мĕншĕн тесен мăрйи çук,—хуликансем ишĕлтерсе антарнă пулмалла.

Ҫалăш Куçма пек ҫалăшса кайнă кутник çине ларса пĕҫĕк саççетани туса илнĕ ҫухне, каçан *) кĕçме пуларĕ. Унтан хыçап, кунтан хыçап, малтан хыçап, кайран хыçап,—тем ҫухлĕ хыççан та, хыçса тăранаймастăп. Иалканашĕ те хыçкаланаť, писсăрĕ те хыçкаланаť. Пăрçа йерсе тулнă пире. Сиккелесе тăркаласа мĕн калаçмаллине кĕскен калаçса илтĕмĕр те, тухрăмăр хыçкаланса халăх патне. Ратио çинҫен, хыттăн ковориттĕл çинҫен, електритсăн аслатиллĕ вăй хăваҫĕ çинҫен каласа тăнă çĕртех.,. ох!... кĕçме пуçларĕ-ĕ! Ăшалангараť анҫах! Тӳсмелле те мар.

Хам йара парап токлата. Сăмах хыççăн сăмах тухса пыраť, мĕншĕн тесен пăрçасем васкатаççĕ.

— Електритсă, тетĕп.—Ох, вăл електритсă! Америкре електритсăпа çынсене вĕлереççĕ. Çынсене мар, çын пăрçисене те пĕтерме пулаť унпа, мĕншĕн тесен електритсă... Ох вăл... ҫăгмалла мар хыçаť, тетĕп.

О-ох, кышлаççĕ мана пăрçасем. Пĕтереççĕ вĕт! Хурах!—тесех кăшкăрса йамалла та, анҫах лайăх пек мар. Ай-ай лайăх ăшалантараççĕ! Ҫăтмалла мар, вĕт! токлат туса пĕтермесĕрех трипунă çинҫĕн сиксе антăм та, çулла нăрăпа аптранă ĕне пек, йара патăм аналла. Çăтăлти-çăтăлти, çăтăлти-çатăлти!.. Хура халăх хура йупа пек

---

*) Каçан—çурăм.

хытса тĕлĕнсе йулҫĕ. Епĕ пур... Каçан кĕçет, кутăм кĕçет, ура кĕçет, картус кĕçет... Ниçта кайса кĕмелле мар.

Ҫупрăм-ҫупрăм, ҫупрăм-ҫупрăм. Пĕр виç çухрăм ҫупсан пăрçисене силлесе пахас, терĕм. Вăрвар, тӳмисене татсах, кĕпе-йĕме хывса илтĕм те, силлесе пыратăп çил çинҫе. Ҫупсах силлетĕп. Йĕксĕк пăрçасем силлесе пăрахсан та, ман çара ӳт çине каллех улăхса лараççĕ. Кĕпе-йĕме ывăтса хăварас терĕм, кĕпĕ-йĕмсĕр ҫупма, хăвăр та пĕлетĕр ĕнтĕ, киҫем пек... хĕрарăмсем хурма пултараççĕ.

Силлесе те май килмерĕ. Шыв хĕрнелле çатăлтаттартăм.

Шомпăр!—сикрĕм шыва. Кĕпе-йĕмпех, — пăрçасене шыва путарма Путмаççĕ шелмăсем! Ман хыççăн ишсе пыраççĕ. Шывра çӳресен-çӳресен типпе тухса выртрăм шапа пек. Нумайах выртаймарăм. Тапратрĕç каллех кĕçĕтме. Шывран тухнă та, шыраса тупнă мана. Ай, кĕçĕтеççĕ! Ăшалантараççĕ анҫах. Кĕпе-йĕме тăхăнса йара патăм малалла. Шывра пулнă кĕпĕ-йĕм ӳт çумне çыпăçса ларнă. Ҫупма çăмăл. Манпа пĕрле каçалла сулăннă хĕвелĕ те ҫупса пыраť.

Пĕр сехет хушшинҫе 10 çухрăм ытла ҫупрăм. Сиккипе пырса кĕтĕм хулана. Курсан рыссак тейĕн. Милитсисем курҫĕç те, хăвалама тытăнҫĕç, те таркăн тенĕ. Ех, ҫупаççĕ! Еп çăтăлти-çатăлти!... Ăçтан хуса çитен мана! Йероплан пек кайатăп, вĕт!

— Арăм, терĕм,—ан çыпçăн ман çума! Кӳр мана таса кĕпе-йĕм!

— Ухмаха йертĕни мĕн, йĕксĕк, тет.

— Ан калаçса тăрха кунта. Кӳр кĕпе-йĕмна! Мунҫана кайатăп.

Арăм йĕрсе йаҫĕ. Йĕре-йĕрех илсе пыраť ман пата таса кĕпе-йĕм.

— Ан пыр ман, пата—кăшкăрап епĕ. —Пырсан вилетĕн, çакăнтах вилетĕн. Халер йернĕ мана. Турҫăка ил те, кĕпе-йĕмсене турҫăка вĕçне хурса тыттар катаран. Ахалĕн халер çисе йараť сана, тетĕп.

Тытрĕ турҫăка арăм. Йĕре-йĕрех паҫĕ мана турҫăка вĕçĕн кĕпе-йĕм.

Ывăннăскер автомопил пек мăшласа пырса кĕтĕм хайхискĕр епĕ хула мунҫине.

Ну, çăвăнтăм вара! Ӳт-тир çӳхелсех кайрĕ пулмалла.

Пĕрик сехетрен тухатăп çывăнмалли пӳлĕмрен кĕпесем тăхăнмалли пулĕме те...

Кĕпесем тăхăнмалли пӳлĕмре харкашу тапранса кайнă. Ех, харкашаççĕ! Путылкка ăшне пухса хупнă шăнасем пекех сĕрлеççĕ.

Пăрçа йерсе тулнă вĕсене те.

Пăрçа хуçине шырама тапратнă халăх.

Мунҫари халăх, епĕ пăрçа йертсе килнине сисессрен хăраса, кĕпене тăхăнтăм та, тӳмисене тӳмелемесĕрех тухса карăм мунҫаран. Пăрçасем сахалланнă пек.

Ҫупса ăш хыпнăскерĕн ĕçес килекен пулнă.

Пивнойа кĕтĕм. 4 литтăр умра. Ĕçетĕп. Стаккан хыççăн стаккан йанклататăп. Сăра ĕçнĕ ҫухне çимелли пăрçине те паҫĕç. Çийĕтĕп пăрçине те.

Пăх та пăрçа тирĕкĕ ăшне... Пăрçасем сиккелеççĕ унта та. Ах, воспоти... Çăварти пăрçара та...: Ăш капланса килҫĕ!... Хăсма тытăнтăм.

Çавăнтан вара çимелли пăрçана курсассăнах пыр шăтăкĕ йăкăл-йăкăл тума пуçлаť.

Çапла куртăм çав иртнĕ уйăхра! Малалла ĕнтĕ нихăçан та хурал пӳрт тенĕ çĕре кĕмелле ан пултăр...

Ара, киле пырсан арăм та, аҫамсем те, пăрçапа аптрама пуçларĕç, вĕт! Тухтăр ҫĕнтертĕм. Тухтăрĕ икĕ кун хăтланҫĕ, пирĕн пăрçасене тасатса. Тасатмасан хулипех пăрçаланса каймалла. Епитеми пулаťҫĕ. Хăрушă епитеми! Çапла ĕнтĕ пăрçа тенине ик сортне те йуратмастăп. Ну, вĕсемпелле!...

Мами.

## Пахҫара ӳснĕ шухăшсем.

**1. Кишĕр политтĕк тĕлĕшпе икĕ йенелле уйăрлса кайнă: хĕрли те пулаť вăл, шупки те пулаť.**

**2. Кантăр вăрри çын вăхăтне вăрлакан пӳрократ майлă: никам та ăна сута памасť**

**3. Йӳçĕ кăшман çтена хаçатĕнҫи киревсĕр статйа йеверлĕ: вăл вăрăм та, мăнă, анҫах вулама йӳçĕ.**

**4. Пăрçа икĕ сортлă пулаť: пĕр сортне çийеççĕ, теприне çитереççĕ.**

**5. Паранкă ревиçи комиççи йеверлĕ: куçĕсем пур унăн, анҫах нимĕн те курăймасť.**

## Кушака кулă, шăшийе макра.

Ревисор пĕр копператтива тĕрĕслеме пынă. Виçĕ кун тĕрĕсленĕ––пĕр йăнăш та тупайман. Йăнăшсем пулнă пулсан та, кассăри укçа тĕп тĕрĕсех, пĕр пус та саланса кайман. Правлени ђленĕсене ал памасăрах тухса карĕ ревисор вăл копператтивран.

— Мĕн пирки ал памарĕха ку пире, теççĕ правлени ђленĕсем.

Тепĕр йалта та копператтив лайăх ĕçлени палăрђĕ. Кассине тимĕртен тунă, кассăри укçасем те хăй вырăнђех.

— Шуйттансем, терĕ те, копператтив алăкĕсене шанлаттарса хупса вĕçтере пађĕ пасар йалне. Пасар йалĕнђе «Хĕрлĕ Сухапуç» йатлă копператтива тĕрĕслеме тытăнђĕ. Тĕрĕслерĕ—тĕрĕслерĕ. Кунĕн-çĕрĕн ларса тĕрĕслерĕ. Кассăри укçасем урăх çĕре кайни тупăнмарĕ. Ђышкисене ђăмăртасах тухса кайрĕ ку копператтивран ревисор.

Тăватăмĕшĕнђе те çав майлах. Тĕрĕслесе тухиђђен правлени ђленĕсемпе пĕр сăмах та хушмарĕ. Тĕрĕслесе пĕтерсен, тутисем унăн кăпăкланма пуçларĕç, куçĕсем, пулă куçĕ пек, сиксе тухрĕç. Ђышкисем ђăмăртаннă.

— Пĕтереттĕр мана есĕр!-тет правлени ђленĕсене йунаса. Арăмсем пур вĕт манăн, ађамсем. Мĕнпе тăранса пурăнас ĕнтĕ!

Правлени ђленĕсем йăпшăнса ыйтрĕç.

— Вырантан кăларђĕçи мĕн сана, терĕç.

Ревисор уласа йађĕ.

— Кăларман та, малалла кăлараççĕ. У-у-у!... Ниçта та растраттă çук. Растраттăсем пĕтрĕç, халĕ ĕнтĕ есĕр ревисорсем те кирлĕ мар, теççĕ ĕнтĕ. Октăпĕр револђутси 10 çул çитнĕ çĕре вырăнсăр хăварасшăни мана есĕр... Анне çылăхĕшĕн тўсетĕп пулмалла çакна... у-у-у!..

Йĕрет. Иĕмеллех йĕрет.

Çав вăхăтрах малтан тĕрĕсленĕ йалтан хут килђĕ. Ревисора пађĕç. Хуђĕ çине çапла çырнă: пирĕн каснађей 310 тенкĕ копператтив укçине ђиксе йалтан тухса тарнă, тенĕ.

Ревисорăн тутисем çăмăр айĕн тухакан хĕвел пек йăл кулса йађĕç.

Хут кўрсе параканăн аллине тытса «спаçипă» терĕ те хайхискер, туй йурри йурласа, вĕçтере пађĕ малтанхи йала сиккипе.

ИЛСАРАЙ.

## Таркăнсем.

(Йуптару).

Пĕрре ушкăн йытă тем шут тытса,
Тухса карĕ йала пăрахса.
Ăçта кайаççĕ-ши,
Мĕншĕн тараççĕ-ши
Çав халђенхи кил-çурт хуралçисем?
Паллах: хуçана çиленсе пуђ, темелле;
Пĕр çаврăнса пăхмасăр тараççĕ
çак таркăнсем
Йуртаççĕ аслă вăрман йенелле.
Унта хайсем шухăшлă кайăксем пур вĕсен,
Çавсемпе туслашмах шухăш пур йытăсен.
Туслашмасăр: кил-çурт хуралçи йытти те,
Упи, кашкăрĕ, ытти те—
Пурте ĕнтĕ вĕсем
Çивĕђ шăллă кайăксем;
Пуçра та пĕр шухăш: тытас,
Тулас та пăрахас.
Тулас тĕлĕшрен пирĕн таркăнсем
Вăрман кайакĕсенђен пĕрттех те кайа мар.
Тата çакна та сире калама манас мар:
Вăрман кайăксемпе пĕрлешсе йытăсем
Йал çине килме шуталаççĕ.
Çак шухăшпа ĕнтĕ вĕсем
Вăрмана çитсе пыраççĕ.
Çитрĕç—
Унтан та кунтан
Вăрмантан
Тискер кайăксем тухрĕç,
Аслă ĕшнере
Ирĕкре
Пысăк канашлу турĕç.
Мĕн каласса мĕн ĕç турĕç-ши çакăнта?
Ним те çук! йал çине кайма хăрарĕç!
Пирĕн таркăнсем пайан та
Сулăнса çуреççĕ вăрманта!
Кам ши вĕсем таркăнсем?
Тейĕр есир мана хирĕç.
Ман шутпа—йута тарнă „шуррисем“;
Çавсене ђăннипех таркăн теме тивĕç.

Н. Йевтоккимăв.

# Паллӑ ӗҫ.

Савнӑ йулташсем, ӗнер пирӗн Ҫуксырма пуҫӗнђе ђылай пысӑк ӗҫ пулса иртрӗ.

Епӗр арӑмпа, снађђӑт, тыр вырса килтӗмӗр те, апатсем ҫинӗ хыҫҫӑн хыҫкаланкаласа ларатпӑр. Епӗ тӗпелте ларатӑп. Тӳшек ҫинђе. Ура салтатӑп.

Тӗттӗм пулнӑ. Пӗлӗт ҫинђе, снађђӑт, ҫӑлтӑрсем лараҫҫӗ. Уйӑхӗ унта. Калӑпӑр епӗ хӑрах урана салтса пӗтертӗм те, теприне салтас тесе тӑратӑп, сасартӑл шари! кӑшкӑрса йанӑ сасӑ хӑлхана илтӗнсе карӗ.

Арӑм тени манӑн шап-шурӑ шуралса карӗ. Ђупса пыђӗ те ман пата, шӑппӑн каларӗ:

— Тупата, Сӑпанийе ҫаратаҫҫӗ! Сасси унӑн... Пангитсем...

Ђупса тухас терӗм те епӗ, Сӑпанийе хӑтарма, арӑм йамарӗ.

— Питӗрсе ларт алӑкна! Пантитсем вӗсем нумайӑн! Арӑмна тӑлӑха хӑварасшӑни?

Епӗ калarӑм:

— Ђӑнах, мӗн каймалла унта. Ҫийӗнђен ҫара уран... вӗрӗлме пултаратӑп. Ура ҫалтман пулсан... Алӑка ухватсемпе турђӑкасемпе питӗрсе хутӑмӑр, ҫийӗнђен тата питӗрни ҫирӗпрех пултӑр тесе тытса тӑратпӑр.

Сасартӑк килкарти алӑк уҫӑлнӑ пек илтӗнђӗ. Каллех ним сасђӳ пулмарӗ.

Арӑм калаӗ:

— Карӗҫ пулмалла, тет.

Ҫав вӑхӑтра пирӗн кантӑка ҫӗмӗреҫҫӗ, пӗр ҫынни пӳрте кӗмехленет.

— Сирӗн ҫенӗк (пӳртӳм) ҫунма пуҫланӑ, есӗр алӑк патӗнђе канса тӑраттӑр унта, тет.

Пире анђах мар, кӳршӗсене те ҫавӑн пек ђӳређерен кӑшкарса кӑлармалла пулнӑ. Пурте питӗрӗнсе ларнӑ Сӑпани кӑшкӑрнине илтсен. Тамаша! Никам та, снађђӑт, ирӗккӗн тухасшӑн пулман. Сӑпанисӑр пуҫне. Латнӑ урампра некрутсем пулнӑ. Вӗсем пулман пулсан йалӗпех ҫунса кайнӑ пулӑттӑмӑр.

Тӑватӑ кил ҫунса карӑмӑр. Вут-кӑвар вӑл пантитран та хӑрушӑрах ҫав!..

МИХАЛ МИХАЛЂӐ.

# Йурӑхсӑр пуҫлӑхӑн ӑшђикки.



Карттин ҫине карланкине, ӳпке-пӗверӗсене, ђӗрине, хырӑмне, пыршисене, ватне, т. ыт. те ӳкернӗ.




Мăшăрланнă краштăнсемпе мăшăрланман краштăнсем!

Иртнĕ ернесенђе хамăн уксах кĕсрепелле çўрерĕм Ђăваш çĕршывпелле. Пин те çĕр йапала пухрăм. Иапалисенђен выстăвккă турăм. Тĕлĕнмелли унта нумай—курсассàн кулăн пĕр май.

Пухăнăр, курăр, вара тытсах кулăр!—Тытмасассăн çурăлса кайĕ, çĕнĕрен кăшăл хумалла пулĕ.

Халăх пухăнат̆, выстăвккă уçăлат̆. Пуçлатăп. **Ђăх ури çинђе ларакан пўрт**. Ку пўрт хурал тăмалли пўрт. Патне ан пырăр, çур çухрăмранах тарăр, ишĕлсе анат̆... 99 тĕкĕпе тĕкĕленĕ. Мађђа шăтăкĕнђен уйăх пăхат̆ каçсерен. Пушар хатĕрĕсем „лайăх“, лайăхран йапăх: кăлтăрмађсăр урапасем, çиђшер татăк пакурĕсем, пиђки шăтăк. Кашни шăтăкне... витре кĕмелле. Пусми хуçăк, хуçăнкĕ ванђăк. Насусĕсем пыршăсăр, пыршисем насуссăр.

Алпа ан тытăр кăна, алпа тытмалли мар вăл йапала!

**Çекçи ĕçĕсем**. Шурђа вулăсĕнђи Тăрăн йалĕнђи йалсовет çекси кĕлеггкине аран йăтат̆. Вырсарни кун вăл канат̆, тунти кун вăл выртат̆, мухмăрпалла аташат̆. Ытлари кун паллă кун—кахал çветтуйсене асăнмалла, пит срођнă канмалла. Ерне варинђи йункун, ĕçке каймалла ун. Кĕçнерни кун—кĕçĕн кун йĕпене сисет курпун тем пирки вăл ыратат̆... Ерне кун ваттисене асăнат̆. Шăмат кун ђирсĕр ђирлет. Вырсарни кун канас килет. Çапла ĕнтĕ ернипех çекси канма пĕлетех.

Çекси матур! Канат̆ вăл саттур!

**Çынсăр çурт**. Çакă тĕлĕнмелле пўрт вывĕски «вуламалли çурт», ăшĕ пуш хампар. Тултан пăхар—çăрапаантпĕрнĕ, ђўређерен пăхар—кирек-км та тĕлĕнĕ: йĕке-хўресем хўрисене авлантарнă, тăваççĕ туйне, шăшисем кĕнекисене вулаççĕ. Вуласа та ĕнтĕ тухаççĕ политкрамăттă кĕнекине. Вуламалли çурт пуçлăхне тупас тесен—тупаймăр, курас тесен кураймăр: çынсем пырса вăратасран ăслăскер, вĕреннĕскер, капан айне кĕрсе выртнă. Ах! Сисеђђен насуспа пĕрĕхсе пăхас. Апла вăранатех пулас. Ђшш!

Ђăрш-ш! Вăранма пуçларĕ, шалу



çинђен ыйтрĕ...

**Ура хуçмалли машшин**. Кĕçĕн-Иелђĕк кĕперĕ такама та тĕлĕнтерĕ. Унăн урлă каçнă ђух кесре ури анса кайат̆... ух!... Ху кĕсре пакарги айне кĕрсе выртатăн шапалла. Кайран халăх ђупса пырат̆, сăмсунтан туртса кăларат̆.

# Сыпӑксӑр ункӑ.

Пирӗн йалта Арпус Васлейӗ пулнӑ. Ӑна пурте „Арпус“ тесе ђӗннӗ. Вӑт тамаша! Харпӑрхӑй йађӗ пур ҫинђенех таҫтан, муртан тийесе килекен арпус йатне илтес пулат̆. Путлӗ йапалам?! Ӑшне ҫи те, хуппи—сыснасене.

Пирӗн йалти Васлей йаланах ҫапла шутланӑ. Ҫавӑнпа та хӑйне „Арпус“ тесе ђӗннӗшӗн питӗ ҫилленнӗ.

Пӗрре вӑл пасара кайнӑ. Ҫынсем арпус ҫинине курнӑ та, арпус сутакансем патне пынӑ. Лешсен арпуспа пӗрле тӗрлӗ таварсем выртнӑ. Ҫавӑнпа та тӗлли паллипе каламасан, илсе пама питӗ те хӗн пулнӑ. Анђах—арпус парха, тесе ыйтма пирӗн Арпус питӗ те вӑтаннӑ. Ҫавӑнпа та вӑл:

— Ҫавна парха, тенӗ.

Лешсем, ђасах арпус вырӑнне—шӑхлиђ илсе панӑ.

— Ӑна мар, лешне.

— Ҫак шӑхлиђне-и?

— Ӑна мар, лешне.

— Ҫак картуса-и?

— Ӑна мар, лешне.

— Ҫак шӗшле-и?

— Ӑна мар, ҫакна.

— Е-е е, ҫак шертешнике-и?

— Ӑна мар, лешне.

— Арпус-и?

— Кам каланӑ сире ман хушама-та, шуйттан пырӗсем!

Ҫилленнипе Арпус арпусне илмесӗрех уттарђӗ.

Усламҫӗсем, темӗн ђухлӗ сутасшӑн ҫунђӗҫ пулсан та, Арпуса арпус сутаймарӗҫ.

---

Кӗсрӳна хуринђен туртаҫҫӗ темиҫен. Хӳрипе виҫ ђӗрӗкӗ татӑлат̆ кайат̆, пӗр ђӗрӗкӗ хӳринђе йулат̆. Хыҫ карӑнса туртнипе хӑйсем ҫӑра пылђӑк ӑшне сулӑнса укеҫҫӗ ушкӑнпе, пӳсӗр ҫиме пуҫлат̆ вӗсене. Ку кӗперӗн хуҫи сӑнне туйапала хӗнемелле!

Ну, пайанлӑха ҫитӗ. Киле кайӑрах ӗнтӗ. Ҫӗнӗрен йапаласем пухӑп, сире каллех кӑтартӑп. Халӗ ӗнтӗ сыв пулӑр, ҫыру ҫырма ан манӑр!

Капкӑнҫӑ Йаван.

* * *

— Пӗртӗн пӗр хӗр ку ман. Тархасшӑн илӗрха пулђнитсӑна сывалма, ку вилсен епӗ хам та вилем вара,—тесе йӑлӑнат̆ Шӑхасан пулђнитсинђе Ђӑрӑш Кассинђи (Шӑх. в.) Йакку Васлейӗ хӑйӗн сувсӑрланнӑ хӗрне—Плакийе лашапа тийесе пынӑ та, пулђнитсӑна хума тархасласа.

— Кунта мар, лере.

— Мӗнле лере, воспотин тухтӑр?

— Вӑп лере.

— Ҫак тепӗр пӳлӗмне-и?

— Унта мар, лере, Канаш пулђнитсине.

Йакку Васлейӗ вилес вӗсне ҫитнӗ хӗрне Канаш пулђнитсине тийесе пыђӗ.

— Ман хӗре пулђнитсӑна хурӑр--ха.

— Пултараймастпӑр.

— Мӗншӗн?

— Мӗншӗн тесен, вӑл сывӑмар.

— Есӗр кунта сыввисене ҫеҫ сыватма пултаратрам тата?

— Ђирлисене те сывататпӑр. Анђах сан хӗрне сыватма пултараймастпӑр. Ҫӗрпӳ пулђнитсине илсе кай.

Лӗпӗстеттерђӗ Васлей Ҫӗрпӳве. Кунта илеҫҫӗ ӗнтӗ, кунга уйес хули, тесе ӗмӗтленсе пырат̆.

Ҫук. Кунта та илмерӗҫ. Кунта Шӑхасана йађӗҫ.

Шӑхасантан Канаша.
Канашран Ҫӗрпӳве.
Ҫӗрпӳрен Шӑхасана.
Унтан каллех Канаша.

Йакку Васлейӗ хӗрне пулђнитсӑран пулђнитсӑна илсе ҫӳресе хӑй те ђирлерӗ. Хӗрӗн тирӗпе шӑмми ҫеҫ тӑрса йулђӗ. Анђах пулђнитсӑран пулђнитсӑна хӑвалама ђарӑнман-ха. Ҫавӑнпа та Йакку Васлейӗ хӑйӗн хӗрӗпе, ҫӗр таврара хӗвел ҫавӑрӑннӑ пек, пӑрмайах ҫаварӑнат̆. Ђарӑнасси паллӑ мар.

Ай-ай вӑл пулђнитсӑсенђе ӗҫлекенсене Йакку Васлей урапине, лаша вырӑнне, кӳлесђӗ. Кӳлме йурӗши?!

Ҫ. Шӑпђӑк.

---

**„Капкӑн“** илекенсене нумайлатас **тӗлӗшпе есӗ мӗн турӑн?**




## Типĕ кашăк çăвара ыраттарать.

Кретит йулташлăхĕн правленири члĕнсем пĕр-пĕринпе йулташлă, ахаль ретовой члĕнĕсем вара правленипе йулташлă мар, хĕллехи пек сиввĕн пăхаççĕ ун çине.

Хунав çырать:

Ыхра-çырми йалĕнчи (Çĕрпӳ у., Йенкасси вул.) «Хресчен» йатлă кретит йулташлăх члĕнĕсем, Шаплат йалĕнчи Никколайĕв Ваççилийе йулташлăхран 45 тенкĕ укçа парсан, унтан 1 витре сăра, 2 путылккă сăмакункка, 1 путылккă хупах ерехĕ ĕçнĕ, тата 25 çăмарга çисе пĕтернĕ. Мĕнле куçпа пăхатăн, «Капкăн» тус, çак йĕркесĕрлĕх çине, тет.

Мĕнле куçпа пăхмалла?! Прокурор куçĕпе пăхас пуль.

## Шăршлă йал.

Сăмсусене тытăр! Шăршлă йапаласем çинчен каласа пĕлтерĕтĕп.

Чупай вулăсĕнче (Çĕрпӳ у.) Еткен опчинчи халăх çĕрйĕркелессе кĕтсе 3—4 çул ĕнтĕ тислĕксене уйа тăкмасăр килĕсенче шăршлантарса выртарать. Шăршăпах вилес пулать, тет Çулăм.

Тархасшăн ан вилха! Есĕ вилсен Еткен опчинче шăршă пĕлекен çын та йулмĕ тата.

## Пĕри кайсан тепри.

Çĕпĕр теки Шупашкартан пит инçе пулсан та, «Капкăн» Çĕпĕрти халăх пурнăçне те курса тăрать.

Ав, Китрухкара (Крапивнă районĕ, Куçнетск окрăкĕ) халăх пухăвĕ пулмалла. Уполномоченнăй йалăн пĕр йенчине ирхине, тепĕр йенчине каçпа хăвалаттарать. Пĕр касси пухăва тухаççĕ, кĕтсе лараççĕ, вара саланаççĕ. Пĕр кассем саланнă çĕре, тепĕр кассем тин пухăва пыраççĕ.

Вăл уполномоченнăйа уполномоченнăйран кăларса сысна кĕтӳне пухма хушас... Анчах унта та вăл пултарас çук, мĕншĕн тесен унăн ăсĕ сысна хӳринчен те кĕскерех, теççĕ. Чăнахши вăл?

## Çĕнĕ нӳхреп.

Нуша кулачĕ çиме вĕрентет, теççĕ. Йетĕрне уйесĕнчи 3-мĕш участкăри халăх сутйине нуша çĕнĕ нӳхреп шухăшласа кăларттарнă.

Нӳхреп çук пирки, вăл тĕрлĕрен çимеллисене çăла, шыв çине çакса йанă. Чĕрĕ какай йунлă тумламĕсем шыва тумланаççĕ... Сута пынă çынсем туллийех çăл кутне шыв ĕçме пухăнаççĕ, анчах шывне ĕçме йĕрĕнмелле, тет пĕри.

Халăх сутйи, санăн чĕрĕ какайа çăлран кăларса пăрахмаллах пулать пуль. Халех кăлармасан чĕрĕ какайран йĕплĕ çăмах пулма пултарать тата. Йĕплĕ çăмах вăл çинĕ чухне те канлĕ мар, хырăмра та канлĕ мар, кайран та... канлех мар,—ыраттарать.

## Тутлă та, хакĕ йӳçĕ.

Тутар респуплĕкĕнчи Чистай кантонĕнчен çыраççĕ:

Çĕнĕ-Аксу йалĕнче (Аксу вул.) пĕр инвалит Иванов Антриан, тӳлевсĕр паттент илсе, кăçал лавкка уçрĕ. Таварĕсене пит хакла сутать. 400 крам сахăршăн 35 пус илет. Çав сахăрах Аксу коопператтивĕ 30 пуса сутать. «Капкăн» калаха: мĕншĕн Иванов Антриана тӳлевсĕр паттент панăха, теççĕ. (Йĕплĕ—Хулă).

Пĕлместпĕр. Мĕншĕн таварсене хакла сутнине те пĕлместпĕр. Сутуилӳ Комиссариат инçпектăрĕнчен ыйтса пăхарха. Мошет, вăл пĕлет.

## Йунлă мыскара.

Ђахă та ĕçет. Ĕçессине ĕçет те, анђах Совет Сойусĕнђи хăш-пĕр краштăнсем пек мар, виçине пĕлет. Краштăнсенђен хăшĕ-пĕрисем: ђун вăл хăйех виçине пĕлет, тесе, ĕçнĕ ђухне хăйсен ђунĕсем çине шанаççĕ. Анђах, наукка кăтартнă тăрăх, епĕр ђун çук, тетпĕрçке. Çук ђун çине шаннă пиркийех ĕçни виçерен тухса кайаť пулмалла.

Упи вулăсĕнђи Танăшра Ђавантти Иекорђă каçхине хурал тăма кайнă. Хурал тăнă çĕре икĕ ўсĕр йĕкĕт—Иехримпе Иакур пынă та Ђаванттин пуçне ђулпа çапса çĕмĕрнĕ. «Капкăн» каçарăни есĕ çав Иехремпе Иакурә, тет Паршђин.

«Капкăнăн» мĕн тума каçарас вĕсене: Иехремпе Иакур «Капкăнăн» пуçлăхĕсем мар, вĕт. Пуçлăхсене вара ирĕксĕрех каçармалла пулаť.

## Пуçсăр çын.

Вĕренни çутă, вĕренменни тĕттĕм, теççĕ. Анђах вăл тĕрĕсех мар пулмалла, пур вĕреннине те çутă теме йурамасť.

Мăналти (Сĕнтĕр вул.) Иарослав Павăлĕн Йаккуйĕ сысна хăлхипе хўриве касса илме вĕренсе кайнă. Каплах пулсан, пирĕн йалта хăлхасăр сыснасем ĕрђесе кайĕç, тет пĕри.

Хăлхасăр сыснасемшĕн йĕретĕн тата есĕ. Иарослав Йаккуйĕн пуçĕ çухалнă та, анђах вăл уншăн пĕртте йĕмесť.

## Çĕнĕ улшуç.

Кĕçĕн-Йелђĕк вулăсĕнђи Мăн-Иавăш хресђенĕсен çитес кунсенђе Патти Пурис йупилейне иртермелле пулаť.

Киркка çыраť.

Патти Пурис хĕрарăмпа улшуç тума пуçланни икĕ çул çитет. 1905-мĕш çулга çуралнă пулсан та вăл, икĕ çул хушшинђе 9 арăм илсе кăларса йаđĕ, тет.

Хĕрарăмсене кăларса йанă вăхăтра Патти Пурисĕн ăсĕ те тухса кайнă пулмалла. Ăсĕ тухса кайнăран вăл йĕплĕ çăмах çийесшĕн çўрет. Хĕрарăмсем, сут урлă ăс тупса парăрха çавна.

## Çын пўрни тутли?

Пăхăрха—мĕнле крушоксем ĕçлеççĕ йалта.

Хыркасси йалĕнђе (Шемшер вулăс) Алтаккин Васлипе Сахар Ухванисĕ çитерме тухсан картла выђаса çапăçма тапратнă. Сахар Ухванисĕ Алтаккин Васлин пўрнине çыртса татса илнĕ. Ухваниç тути така пуснă пек хĕп хĕрлĕ йун пулса пĕтнĕ, тет. Шăпђак ђĕппи.

**Капкăнран**: Ухваниçе çын çийекен тиккарсем патне йамалла. Унта кайасшăн мар пулсан, пўрне вырăнне йĕплĕ çăмах хыптармалла.

## Тупăшлă çапăçу.

Шурђа вулăсĕнђе тата урăхларах ĕçсем пулса иртеççĕ.

Иаштак çыраť:

Шурђа вулăсĕнђи Çĕнйалта туй вăхăтĕнђе, вăрçă пулнă. Вăрçăра Анани, хăйĕн çивĕђ шăлĕпе йарса илсе, Кирулан сăмсине çыртса татсах илнĕ. Халĕ иккĕш çураçасшăн çўреççĕ. Курула Ананирен, Хусана кайса çĕнĕ сăмс‹ ларгмаллăх, 75 тенкĕ укçа илесшĕн, тет.

Мĕн тума çĕнĕ сăмса лартмалла. Сăмса пулмасан «инвалит войны» тесе поссопи илме пулаť, тата услам тума тўлевсĕр паттент пулсан, çĕрĕк пулăпа сут тума та ђараймĕç сана, мĕншĕн тесен: сăмса çук та манăн ку пулă çĕрĕккине пĕлмен еп, теме пултаратăн.

## Паруслă йĕм.

Кĕçĕн-Иелђĕк вулăсĕнђен Ерĕм çыраť:

Кĕçĕн Иелђĕкре пушар хатĕрĕсем пур те пур, анђах парус çук. Вăл паруса Секке Микихверĕ илсе кайнă та, шалавар туса çĕлетнĕ, тет.

Мĕн тĕлĕнмелли пур унтан Ерĕм йулташ? Пирĕн кунта, Шупашкарта, йĕнерђĕкрен сăран кутлă шалавар çĕлетеççĕ те, саççетанисенђе ларса йĕм ан çĕтĕлтĕр тесе, çапах та епĕр тĕлĕнместпĕр. Вăл ĕçрен сут таврашĕсем тĕлĕнĕç-и анђах.

## Куç улталӑт.

Шупашкар çыннине вĕтĕ алапа алаcа тунă ыраш çăкри те куладăн курăнат̆*).

———

Ĕç шыракан çынна, хулара пĕрпĕр паллан̆ çынна курса калаçсан та, ĕç тупнан туйăнат̆.

———

Рапфака ексамĕн тытма килнĕ çынва, рапфак пӳлĕмĕсем тăрăх çӳресе тухсассăн та, рапфакран вĕренсе тухнăн туйăнат̆.

———

Йалти копператтăра, пĕрпĕр лайăхрах тумланнă, палламан çын йала кĕрсен те, ревисор килнĕн туйăнат̆.

———

*) Шупашкарта ни тул сăнăхĕ çук, ни лайăх куладă çук.

## Решим тавра.

Комунхос йапăххипе, Шупашкарта урамсенде кăнтăрлах електритсă çунат̆.



— Кунта леш, пӳрократ текеннисене шыраççĕ пулмалла. Те, леш, решим майлисене-ха... Кăнтăрлах хунар çутса йанă.

## „Телейсĕр“ сысна.

(Йуптарса калани).

Сысна хăйĕн пурнăçне
Лашаннипе танаштарнă.
Кил хуçи лашава йуратни
Дылай ăна тарăхтарнă.
— Пулат̆ усал хуça
Тĕлĕнтерет йалтах ман пуça,
Савмаст̆ мана,—тăмсай!—тет.
Анкартине кĕме çук
Алтуййипех ĕнселет.
А çав усал лашана
Дунтан йуратат̆,
Сĕлĕ, çăкăр вăт ăна
Савса çитарат̆.
Мĕн тăват̆-ха вăл усал?
Килте кăна пурăнат̆.
Ака-суха тăвасса
Кăпшанкă та пултарат̆!
Мана çаран çĕтсен те
Пĕр ыр сăмах каламаст̆.
Ах тăшман! ес мурр! тесе
Ура тапсах кăшкăрат̆.
Мĕн туман-ши епĕ уншăн?
Шутласа пăхам,
Вара тăнсăр хуçана
Пысăк ăс парам!
Пĕлтĕр дунтан анкарнде,
Çĕтрĕм лартнă улмине,
Тата иртнĕ хĕл кунде
Турта çуртăм путекне.
Çавах мана ылханат̆
Сăпаçипă вырăнне
Алтуййипе тав тăват̆.
Ахад мар пулĕ калан̆
Усă вырăнне сăтăр ту, тесе!—
Тарăхат̆ дунтан сысна.
Мăашг! тусах йатлат̆ хуçана.
Çавах. хуçана йурасах тесе,
Тытăнде тепĕр „ырă“ ĕçе.
Хуçин кĕрĕкне силлес тесе,
Çĕтрĕ пĕтĕм арки-çаннине.
Çапла хăтланнă вăхăтра
Дупса пыдĕ кил хуçи;
— Ах, тăшман ес, мур! тесе
Туййантарде алтуййи.

* * *

Çакнашкал пулаççĕ çынсенде те.
„Ырă“ сысна йышшисем.
Хăйсем йăнăш ĕç тăваççĕ пулин те
Советах йатлаççĕ йĕксĕксем!

Аттай М.

# Еклеçсĕ.



**ĔНЕ: Ĕне пек ĕçет, теççĕ етемсем! Ăçтан епĕ ун ђухлĕ ĕçейĕп.**

## Йурату çинђен хăй савнине кам мĕнле каласа пĕлтерет.

**Телопроисвотиттĕл**. Есĕ маншăн 12 мĕш расретран *) та хаклăраххине аса илсе, сан пата епĕ хам йуратни çинђен отношени çырса йанăђђĕ. Есĕ хирĕç ответ çырса йамарăн. Халĕ, вырăнтан кăларса йанă çын пек, кашни аса килмесĕренех йĕретĕп. Промыкашккă (типĕтмелли) пулса ман куçшывĕсене типĕтсем!

**Хвершăл**. Сана курсан ман ђĕре суранланђĕ. Хăвăн йурату емелĕпе манăн ђĕре суранĕсене тӳрлетсем. Пурнăç—хиннăй порошок. Манпа еçĕ пĕрлешсен тĕнђере çук сахăр порошокĕ пулса кайĕ. Ђăваш маткисем ман пата çусем илсе килнĕ пек, есĕ те хăвăн çуллă тутуна ман тута патне илсе цырсам.

**Копператтивра ĕçлекен**. Тавар хакĕсем йӳнеллеççĕ, есĕ маншăн нихăçан та йӳнелес çук. Саншăн епĕ растраттă тума та хатĕр. Есĕ ман арăм пулсан, санран ревиçи комиççирен хăрана пекех хăраса пурăнăп. Ех, ман вăрăм сроклă комантировккă Кулине! Хăçан Сакс урлă илнĕ комантировккă, хуђĕ ман алăра пулĕши? Хăçан епĕр алла ал çăвăпăрши?

**Ђăпта ађи**. Есĕ Происвотсойус пекех манран инçетре тăратăн. Пулсам есĕ ман пурнăçăн курăсне ђĕрекенни. Есĕ çува хуппине вађђи çапнă ђăптакан та хитререх, çавăнпа епĕ сана пурнăç ђăптине çапма илесшĕн...

**Пуп**. Ей, таса хĕр Кулине! Сана **алла** хурса хисеплеме тĕрĕс тивĕçлĕ. Есĕ пур хĕрарăмсенђен те хитререх, матăшкăран та илемлĕрех. Çавăнпа сана калатăп! турă ђури каланине итле—кăшт та пулсан ман çак йенђи пит çăмартинђен ĕмсе ђуп туса илсем!...

**Пушарнĕк**. Ман ђĕрере пушар. Сансăрăн пуçне никам та ăна сӳнтерме пултарас çук. Пулсам маншăн ес йалта çук насус,—ђĕрери пушара сӳнтерсем!

Мамн.

*) Телопроисвотиттĕл шалу 7 8-мĕш расрет па илет.

# „Капкӑн“ архивӗ.

## Хут пӗлменнилӗхӗн хӑрушлӑхӗ.

Хут пӗлменни—намӑс мар, инкек-синкек. Анђах, уђиттӗлсем кӑнтӑр кунӗнђех хут пӗлменнипе мухтанса ҫӳреҫҫӗ пулсан, вара намӑсӗ те, инкекӗ те пӗрле хутӑшса кайаҫҫӗ. Ак сӑмахран, Шупашкар петтехнӗккӑмӗнђе вӗренсе тухнӑскер, халӗ Ҫӗрпӳ уйесӗнђи шкулра ађасене сырӑва вӗрентсе пурнакан Тимофейӗв Антрей протокколсене ҫапла ҫырат̆:

| Слушали: | Постановили: |
| --- | --- |
| При решении дела с личными ускорблениями выступил Константин Степанов на президиума особенно на Председателя собрание. Тимофеева. | Так как я приехал 2 июня никаких ускорбление не может быть. указывал пальцами которое, мне мешало продолжит собраний, прошу выяснить через милицию. |

Протокколри ытти пунктисем те ҫав майлах.

Тем тумалла ӗнтӗ ку уђиттӗлпе? Ҫӗнӗрен пуквар вӗрентме Шупашкара илсе килес—шкулӗ тӑлӑха йулат̆, шкулти ађасене хушас-ҫӑмарти ђӑххине вӗрентни пулат̆. Уйесри ҫут пайӗнђе мӗнле шухӑшлаҫҫех пуђ, шухӑшламасан Тимофейӗва уђиттӗле те илес ҫук.

### Пуҫа пӑтратакӑн хут.

Ђӑваш респуплӗкӗнђе вырӑс ђӗлхи реалисатсилленсе пыни ҫак хутран та паллӑ (ӑна Таныш йалсовеђӗ ҫырат̆)

„Дана сие удостоверение сыну гр-на дер. Таныши-Убеевской в лости Цивильского уезда Николая Семонова Михайлу. От роду 11 лет. На предмет получение врачебнаго свидетелства для перетание к суду виновнаго за нанесение ему удар в голову с удетом уздечки гр-нам той же дер. Александр Матвеев имеющих от роду 19 лет при том находились свидетели“...

Кам кама хӗненӗ? Соломон йамасӑр нийепле те пӗлес ҫук. Ђӑваш йалсовеђӗсем вырӑсла ҫырнӑ хутсене тӑнланма Соломон кӗнеки кӑлармалла. Кӗнекине кӑларма ђӑваш ђӗлхине реалисатси тӑвакан комиҫҫи пеккисене хушмалла.

## Ҫамрӑксен ҫулӗ.

**Комсомолӗс.** Есӗр мӗншӗн ҫӗмрӗк троттуар тӑрӑх утаттӑр. Такӑнса ӳкесрен хӑрамастӑри?..

**Пертфӗллӗ ҫын.** Урам варрипе молођош ҫӳретӗр. Вӗсене ҫул парас пулат̆.

**Комсомолӗс.** Ҫул парас теттӗр пулсан, мана ӗҫ тупса парӑр-ха...

**Портфӗллӗ ҫын.** Мӑм... м... м... ун ҫинђен каламаҫҫӗ сана!.. П. В.

## Ваккат патӗнђе.

— Суккӑр пулни уйӑрӑлма сӑлтав парати?

— Парат̆.

— Апла пулсан епӗ хам арӑмпа уйӑрӑлма ӗҫ пуҫарма ыйтатӑп.

— Мӗнле, апла арӑму суккӑрланђӗ-и?

— Ҫук, епӗ хам авланнӑ ђух суккӑр куҫпа илнӗ.

---

## Усӗррисен пурнӑҫӗ хӗсӗнет.




**Ӗҫекен ӗҫлӗ ҫынсем**: Пӗтрӗмӗрех!.. Хурах!... Кравул!.. Вађук салтакран таврӑннӑ!




Шупашкар мунђалапа кӗрмешсех тинкеленет ӗнтӗ. Акӑлђански улпутсен темисе ампар пурçӑн купаланса выртат̆, теççӗ, ун вырӑнне Шупашкарта мунђала пур. Хулари ампарсене пӑхса çӳресен, хађ те темиçе пин пӑт мунђала тупма пулат̆, анђах вӑл çитмест: республӗкри ђӑваша хӗл каçиђђен çил арманӗ çӳллӗш мунђала купи те çитмест. Пӗр ђӑптаçӑран:

— Хӑта, кала-ха! Хӗл каçиђђен миçе пӑт мунђала пӗгереттӗр пуђ есӗр? тесе ыйтрӑм та:

— Кам пӗлет... Аллӑ вуникӗ çӗр пӑтта пӗтет пуђ... кам шутланӑ ӑна! терӗ.

Нумай пӗтет çав мунђала. Çыру пӗлмен старик шуђӗпе те „аллӑ вуникӗ çӗр пӑт“ пӗтет, те, çыру пӗлекен сен шуђӗпе тата нумайтарах пӗтет пулмалла.

Ђӑвашпайсутти вађђи хађ 33 пин пӑт мунђала килмелле. Мӗн пурӗ ӑна вађђи 170 пин пӑта йахӑнах килет. Кунта вӗт, пайтах аллӑ вуникӗ çӗр пулат̆. Кун ђул мунђалана тирпейлесе хума ампар сахал кирлӗ, тетӗр пуђ есӗр... Нумай кирлӗ.

Çавна кура Ђӑвашпайсутти хула тӑрӑх пушӑ ампар шырама тухса кайат̆. Çӳрет, çӳрет Пайсутти те, Шупашкар мунђи хыçӗнђен иртсе кайса ӗлӗкхи арçын мӑнастир хыçне пырса тӑрат̆.

**СКЛАД**
**№ 3**
**ОБЛПОМГОЛА**

текен вывӗскӑ кун куçне курӑнах кайат̆. Питӗрсе хунӑ.—Мӗн хунӑ-ши кунта?—тесе алӑк çурӑкӗнђен пырса пӑхат̆. Хӑма хуçӑкӗсем, çӗрӗк пӗрене пуçӗсем, çӗрсе татӑлнӑ йупа тӗпӗсем курӑнаççӗ.—Ниђђава, кайса калаçас Комунпайпе тет.

* * *

Хула Комунпайӗнђе Ђӑвашпайсутти правленин преçетаттӗлӗпе Комунпайӗ пуçлӑхӗ çапӑçас пек хирӗлеççӗ.

— Мунђала!.. Тупрӑн лайӑх йапала!

— Лайӑх-и, лайах мар-и,—йепле пулсан та сан çӗрӗкӳсӗнђен хаклӑ вӑл...

— Мӗнле çӗрӗк? Есӗ авалхи йапалана, ӳлӗмрен ађун ађин ађисем курса тӗлӗнмелле йапаласене йепле: çӗрӗк, теме пултаратӑн, е?—тет Комунпайӗ.

— Мӗн кирлӗ мара калаçатӑн? Ытах „хаклӑ“ йапаласем пулсан, пӗђӗкрех ампар та çитет... Пар ӗнтӗ!

— Çук, çук... Муçейе йурӑхлӑ йапаласем унта... Улӗмрен, ађун ађин ађисен ађисем: Шупашкар пӑрки канавӗсене ђавнӑ ђухне тупнӑ, тахçанхи йупа тӗпӗсем ӑçта?—тесе ыйтсан, манӑн мӗн каламалла вара вӗсене хирӗç?.. Ну! Мӗн калас вара манӑн? Кала!

Ђӑвашпайсутти çаврӑнђӗ те, тухса кайрӗ. Аптранӑ йенне Атӑл хӗрне пырса тӑђӗ.

Вӗтçеç çӑмӑр пӗрӗхет. Атӑл çийӗ хура тӑхлан пек хуралса выртат̆. Приçтӑнђ таврашӑнђе йӗпенсе кайнӑ псаширсем çӳхе пиншак çухисене тӑратса, ӑшӑнас тесе, калла-малла уткаласа çӳреççӗ.

— Кӗркунне çитрӗ... Мунђалана ӑçта хурас пулат̆-ха?.. Ма . çӗр çӑтмӗ ку Комунпайне!.. Пӗр тӗпсӗр аварђӗ ун тӗлне!... тесе ылханат̆ Пайсуттин претçетаттӗлӗ.

Ђӑптаçӑсем типӗ, перççитски пурçӑн пек, шурӑ мунђала килессе кӗтсе тӑраççӗ. Кӗрхи çӑмӑр тӗтреленсе тӑрат̆. Пайсутти ампар шырат̆. Комунпайӗ çӗрӗк йупа тӗпӗсен муçейне уçат̆.

Ђул хула йенђен Атӑлпа мунђала парши килет... килет!.. Комунпай у...., муçей уçат̆... уçат̆... уçат̆!.. Мунђала вађђи склат çук...

Етмен А.

# Ҫывӑрттаракан емел.



— Ма ҫывӑрмастӑн?
— Ыйхӑ килмест.
— Апла пулсан йалсовет ҫексине кӗр. Унтисем лайӑх ҫывӑраҫҫӗ.

## Ҫ ӑ м а р т а.

(Тневникран).

*Ҫентӑпӗрӗн 7-мӗшӗ.* Совет влаҫӗ пуҫланни 10 ҫул ҫитет пулсӑн та, Совет Сойусӗнҭе шулӗксем, мурсем, пӗтсе ҫитмен. Пасарта пӗр хӗрарӑмран 20 ҫӑмарта илтӗм. Киле пырсан, хырӑм хыр тӑрне хӑпарса кайнӑ пирки, виҫҫӗшне пӗҫертӗм. Пурте ҭӗпӗллӗ. Шуйттансем, ӗҫсыннине улталасшӑн ҫеҫ пурӑнаҫҫӗ! Намӑсӗсем ӑҫташи?

*Ҫентӑпӗрӗн 10-мӗшӗ.* Ҭӗпӗллӗ пулнӑ ҫӑмартасем ҫинҭенех шухӑшларӑм. Кӑнтӑрлахи апат ҫимерӗм. Ех, ҫӗр тӗпне анса кайманскерсем! Шулӗксем!...

*Ҫентӑпӗрӗн 12-мӗшӗ.* Апат ҫинӗ хыҫҫӑн, ҭӗпӗллӗ ҫӑмартасене хӗвел витӗр тепӗр хут пӑхса тухрӑм. Пуҫӗнҭен пересҭӗ ку ҫӑмартасемпе сутаканне!...

*Ҫентӑпӗрӗн 13-мӗшӗ.* Пайан ҭей те ӗҫмерӗм. Проккурор ма асӑрхамасӑши ҫав ҫӑмартапа улталакан шулӗксене!...

*Ҫентӑпӗрӗн 14-мӗшӗ.* Ҫывӑраймӑрӑм. Шулӗкӗ ҭип-ҭиперех ҫывӑраӑ пуҭ. Ах, катӑршнай!...

*Ҫентӑпӗрӗн 16-мӗшӗ.*—(Ерне кун) ур-ра! Ҭӗпӗллӗ ҫӑмартасене сутрӑм. Платниксем илҭӗҫ. М.

---

### Усӑллӑ.

— Хысна туса панӑ кӗпер ҭалӑшма пуҫлаҭӗ.
— Кӗперӗ ҭалӑшсан та, уншӑн кӗперне тӑвакан технӗкӗ йусанса карӗ.

### Паллах.

— Ҫынпа виҫӗ хут ҫапӑҫсан мӗн пулаӑ?
— Тӑватӑ хут ҫапӑҫмалла пулаӑ.

# „Капкăн“ хыпарĕсем.

**Çанталăк мĕнле пулассине калаcа хуни.** Опçерваттори каласа хунă тăрăх, Шупашкарта çевтапĕр уйăхĕнђе ăшă пулмалла комунхос мунђинђе, сивĕ-тèрмере. Типĕ пулат йункунпа ернекун (хăш-пĕр мешђенсемшĕн), йĕпе пулат ĕçме йуратакан çынсен пырĕнђе.

**Комсомолĕс хăйне-хăй вĕлернĕ.** Çĕнйал (Шупашкар вулăсĕ) йађейккинђи комсомолĕс Иакку Петĕрĕ, хăй комсомолта тăнине вĕлерес шутпа, туй туса авланнă, туйĕнђе турра пуççапнă. Иаккăвлĕв Петр комсомолĕс вилђĕ, ун вăрăнне ђастнăй çын Йакку Петĕрĕ йулђĕ. Йулашки хыпарсем пĕлтернĕ тăрăх, Иаккăвлĕв комсомолĕса «Капкăнăн» 17-мĕш нумĕрне илсен пытараççĕ.

**Аташса кайнине тÿрлетме пулат.** 2-мĕш сыпăклă шкулта вĕренекен Ђĕрес Ваççи «Капкăнăн» пур номĕрĕсене те вуласа пынă пирки, пĕтĕмĕшпех йусанса кайнă, аташма ђарăннă. Ашшĕсем хĕпĕртеççĕ.

**Йалкора хĕсĕрленĕ.** Иртнĕ вырсарни кун ђиркÿрен тухнă ђух, халăх Иванов йалкора алăкран тухнă ђухне хĕсĕрлесе лартнă. Ун пирки прокуратурă тоснани тумаст.

**Хуликансем тăна кĕреççĕ.** Виçĕ кун хушши çĕр çывăрмасăр ĕçнĕ пирки, тăнсăра тухнă хуликансем—Ваççи Вађккипе Митакин Карп милитси путкинђе тăна кĕнĕ.

## Пуштă йешђĕкĕ.

**А. В.**—Хам атрĕса халĕ кăта тмастап, тетĕн. Кирлех мар. Хăпана пыма хатĕрленместпĕр.

**Планетта.** 29 пуслăх кивĕ маркăсем йанă та есĕ, 3 уйăхлăх „Капкăн“ илесшĕн. Шулĕксен орканисатсинђе тăратăни мĕн есĕ?

**Хĕрлĕ урана.** Ман калава çапмасассăн пуштă йешђĕкĕнђе ответ ан парăр, тетĕн. Йурĕ. Ответ памастпăр.

**Максăма.**—Хĕрсенђен мăшкăласа çырнă çак фелйеттона пĕр вăтанмасăрах кĕскетме те пултараттăр, хушма та пултараттăр, тетĕн. Вăтанмарăмăр. Пĕтĕмĕшпех кĕскетрĕмĕр. Нимĕн те йулмарĕ.

**Хĕрлĕ атта.**—Сава вакс сĕрмелле. Шăннă йур çийĕн нумай çÿренĕрен хĕрелнĕ есĕ. Атă хура пулма кирлĕ.


## Хăвăр йуратнă

## „КАПКĂН“

ырханланса ан кайтăр тесен, ăна вађђи потписђĕксем тупса йарăр.

**ХАКĔ** унăн çĕнĕ çулђен 30 пус, 6 уйăхшăн 60 пус, çулталăкшăн 1 манет.

**АТРĔС** Чебоксары, Канашская. Контора газеты „КАНАШ“.

**Хуђĕ çине хăвăрăн атрĕсна, тата „Капкăн“ илме тесе çырма ан манăр!**

# Ђемперлен тĕлĕннĕ.

„Хĕрлĕ Ђăваш“ йероплана туса Ђемперлена тĕлĕнтере!..
(„К а н а ш р а н“).



**Ђемперленпа тусĕсем:** Хăш тĕлге пурăнаççĕ-ши ку ђăвашсем? Карт çинђе те, клопус çинђе те палăрмаст.

Зам. Отв. редактора **П. Петров.**

Чувашлит № 2050 Чебоксары, тип. „Чувашская Книга“.